# ПУЛТАРУЛĂХ ВĂРТĂНЛĂХĔСЕМ

*Хайлав авторĕ - экономикă наукисен кандидачĕ, Раççей журналистсен союзĕн членĕ - Александр Алексеевич Зимин. Раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче ăна 70 çул тултарать.Хăйĕн пурнăçне А.А.Зимин Шупашкар завочĕсенче, университетра, ялхуçалăх академинче, Чăваш тĕпчев институтĕнче ирттернĕ. Чăваш энциклопедин иккĕмĕш кĕнекин сăмахĕсемпе каласан, вăл слесарь те, технолог та, хаçат ĕçченĕ те, доцент та, предприятисемпе вĕрентя учрежденийĕсен ертяçи пулса курнă.*

*Халĕ темиçе çул Александр Алексеевич хайĕн пултарулăх еткерлĕхне йĕркене кĕртсе пурăнать. Çавна май юлашки виçĕ çул хушшинче унăн икĕ томлă «Управление участками», хаçатсенче пичетленнĕ хайлавсен калăпăшлă пуххи «Просторы творчества», Николай шăлнĕпе çырнă «Песни братьев Зиминых», 237 документсен пухăвĕ «Труд автора» çутă курнă.*

*Кĕнекесене вырăсла çырать пулин те, вăл чăваш чĕлхине манмасть, хаçатсенче, журналсенче тăван сăмахпа техникăпа ăслав çинчен халăх ăнланмалли очерксем çырать. Вĕсенчен пĕрине эпир вулакансене сĕнесшĕн, авторне вара юбилей ячĕпе ырлăх-сывлăх сунасшăн.*

Хальхи вăхăт ĕç çине нихçанхинчен те тимлĕрех пăхма хистет. Политикăра та, экономикăра та, суту-иляре е техникăра чи малтан пултарулăх кирлĕ. Илемлĕ литературăпа искусствăра та пултарулăхпа пултарулăх тĕпре.

Мĕн вăл пултарулăх? Хавхаланулла çын пулас тесен, мĕн тумалла? Мĕнле пĕрьевĕрлĕхсем пур-ши тĕпчевçĕпе сăвăç хушшинче? Композиторпа инженера мĕн хурăнташлантарать? Художникпа ăсчаха тата мĕн пĕрлештерет?

Авалхи грексем пире валли халиччен те татса паман нумай ыйту хăварнă. Вĕсенчен пĕри пирĕн малаллахи калаçăва çывăх ыйту кăларса тăрататъ: «Мĕн шырамаллине пĕлместпĕр пулсан, ăçтан тупăнать-ха çĕнĕ пĕля?». Çак ыйтура - хавхаланăвăн хăй евĕрлĕ вăрттăнлăхĕ.

Аталанса пынă май, этемлĕх чылай çĕнĕ пĕля пуçтарнă, нумай пысăк çитĕня тунă. Анчах мĕн пĕлет-ши вăл хайĕн ăс-тăнĕ, интелекчĕ, ĕмĕт-шухăшĕ, шалти туйăмĕсем çинчен? Шел пулин те, вĕрентя ĕçĕ Песталоццирен пуçласа пысăк утăм туман, çын темпераментне пĕлни те Римри Гален анатомран иртмен (вăл 2-мĕш ĕмĕрте пурăннă). Франци поэчĕ Вийон калашле закăн пек пĕтĕмлетя тума пулать:

- Эпĕ тем те пĕлетĕп, хам çинчен çеç нимĕн те пĕлместĕп!

Çынсем ĕмĕртен ĕмĕре упранса юлас тесе, кĕрешсе пураннă, таврари тĕнчепе те вăй виçме тивнĕ вĕсен, вăрçăра пĕр-пĕрин юнне чылай юхтарнă. Çак кĕрешяре этемлĕх хай çине тимлĕмрех çаврăнса пăхма вăхăт тупайман.

Халăх литературăпа искусствăра тунă тухăçлă ĕçсен теслĕхĕсене сахал мар пĕлет. Çавăнпа та творчествăна ансат та çăмăл тесе хаклакансем те пур. «Мĕнех, сĕтел хушшине лар та çыр кăна», - тенĕ евĕр шухашлаççĕ вĕсем. Франци математикĕ Анри Пуанкаре асаилĕвĕ те çакна çирĕплетет пек:

-Кутанс хулине çитсен, пире уçăлса çяреме карета хатĕрлерĕç. Çавăн чухне урапа кямин пускăчи çине пусрăм кăна, пуçа тярех çĕнĕ идея пырса кĕчĕ, унччен вара эпĕ ун пирки нихăçан та шухăшламан.

Чăн та, пуçĕ çине ăнсăртран панулми укнĕ Ньютон тĕслĕхĕ, ваннăран çаппа-çарамас сиксе тухса урам тăрăх: «Эврика!» - тесе кăшкăрса чупакан Архимед тĕслĕхĕ те телейлĕ ăнсăртлăх. Анчах та «телейлĕ ăнсăртлăх» сиксе тухтăр тесен, пĕтĕм пурнăç тăршшипех вăя шеллемесĕр вĕренес, ĕçлес пулать, ĕç ăнманнине те, темĕн чухлĕ усăсăр аппаланнине те шута илмелле.

Анчах вăй хуни çеç пысăк пĕлтерĕшлĕ чаплă литература произведенийĕ çураласса пĕлтермест-ха. Хăш-пĕр чухне çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр çырнă роман е повесть вулакана пачах та интереслентермен хайлав пулса юлма пултарать. Хавхаланулла ĕçлекен çынна

пĕр япала çеç чăн-чăн савăнăç кярет: вăл хайĕн ĕçĕпе малашлăха тепĕр çĕнĕ утăм туни, çĕнĕ сăмах калани. Ку вăл ăсчахсемшĕн те пĕлтерĕшлĕ.

Калăпăр, лихенологие (ботаникăра тĕрлĕ мăксене тĕпчекен пĕля) малтанласа ниме тăман наука вырăнне шутланă, çав мăксем çинче ясекен кăмпасенчен пенициллин тума пуçласан тин çак шухăш парахăçланнă. Математика логики те нумай çул хушши ăс-хакăлăн усăсăр вайи пек шутланнă, халĕ вара шăпах ун çинче дискретлă машинăсен теорийĕ, ЭВМ-сен программисем пичетленеççĕ.

Кирек мĕнле çĕре те вăй хунипе пĕрлех кăмăл çирĕплĕхĕ те юнашар пымалла. Вĕсем çумне хăнăхупа пĕля хушăпăр. Алла ручка тытма, чĕлхене, азбукăна пĕлмесен, роман мар, анне е савни патне çыру та çырaймăн, кирлĕ хут çине алă та пусаймăн.

Тата мĕн кирлĕ-ши творчество ĕçĕ валли? Вăй хунисĕр, кăмăл çирĕплĕхĕсĕр, хăнăхусăр, пĕлясĕр пуçне шухăшлама пултарни, пĕр япалана тепринчен тĕрĕс уйăрма пĕлни кирлĕ. Çавăн чухне кăна çын ăнăçлă ĕçлеме тытăнать, шăп çакнашкал условисенче кăна вăл обществăшăн, социаллă ушкăншăн, халахшăн, ăслăлăхшăн, техникăшăн, литературăпа искусствăшăн чăннипех те кирлĕ шухăш, идея, халиччен пулман çĕнĕлĕх çуратма пултарать.

Паллах, çĕнĕлĕхсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: литературăри илемлĕ сăнар, техникăри тупсăм, наукăри халиччен пулман пĕлтермĕш. Вĕсене пурне те мĕн пĕрлештерет-ха? Халиччен этемлĕх пĕлменнине тупса палăртни, тĕнчери, обществăри пулăмсене пĕтĕçтерни, шалти шайлашу, гармони, малтанхисемпе кайранхи тупсăмсен пĕрлĕхĕпе уйрăмлăхĕ, вĕсен усси т. ыт. те.

- Хитре мар самолетсем тяпене çĕкленеймеççĕ, - тенĕ Антонов авиаконструктор, çĕнĕ модельсене сăнанă май.

- Илемлĕх - чăнлăх çути, - тенĕ пуринчен те маларах пулĕ Фома Аквинский.

Илемлĕх, шалти шайлашу, гармони - акă мĕн пĕрлештерет этемлĕхе çĕнĕлĕх кярекен пулăмсене. Çак енчен унерçĕ, тĕпчевçĕ, поэт, конструктор - пурте пĕр-пĕрне çывăх тăраççĕ.

- Математик ĕçĕ те, сăвăç е художник ĕçĕ пекех, илемлĕ сăнар, пулăм çуратать, - çирĕплетет Англи тĕпчевçи Г. Харди, - формулăсенче те, якерчĕксенчи пекех, шалти шайлашу, илемлĕх пур. Илемлĕх - математикăн чи кирлĕ пайĕ.

Çапах та илемлĕ литературăри сăнар, техникăри çĕнĕлĕх, наукăри çĕнĕ пĕлтерĕш хушшинче уйрăмлăхсем те пур. Сăмахран, сăвăçсем çĕнĕ сăмахсемпе кивви çинчен каласа параççĕ, ăсчахсем вара çĕннине кивĕ сăмахсемпе ăнлантараççĕ.

Ку тулашран курăнакан уйрăмлăх. Тĕрĕссипе вара сăнар, çĕнĕлĕх, пĕлтерĕш хушшинчи уйрăмлăх чылай тарăнрах. Чи малтанах, вĕсен кашнин ĕмĕрĕ - расна. Литературăпа искусство çынсене яланах хумхантаракан сăнарсемпе илĕртет: Ырăпа Усал, Юратупа Курайманлăх, Савăнăçпа Хурлăх, Хаюлăхпа Хăравçăлăх, ĕçченлĕхпе Наянлăх, Илемлĕхпе Йĕрсĕрлĕх... Вĕсене асăн çеç, тярех Нарспипе Сетнер, Тăхтаманпа Айтар, Отеллопа Гамлет сăнарĕсем аса килеççĕ...

Литературăпа искусство произведенийĕсем ватăлма, кивелме пĕлменни - кашни илемлĕ сăнар пĕлтерĕшлĕ пулнинче, тĕрлĕ çын вĕсене хăйне май ăнланнинче. Кашни ăру çав произведенисенче хăй вăхăчĕшĕн чăннипех те кирлĕ темăсем, кĕвĕсем, пулăмсем тупать, çавăн пекех вăл авалхи тĕнче литературине те, вăтам ĕмĕрсенче çырнă романсемпе поэмăсене те, иртнĕ ĕмĕрсенчи пур тĕрлĕ хайлавсене те чĕре патне илме пултарать. Çавна пулах пирĕнпе яланах - çул çяреме юратакан Одиссейпа иккĕленекен Гамлет, ĕмĕтленекен Лорелейăпа ырми-канми Фауст.

Вĕсемпе танлаштарсан, наукăпа техникăри тупсăм ĕмĕрĕ яланлăха пыраймасть, вăл сăнавсем çирĕплетнĕ май кăна пурăнать. Анчах та наукăна вăл хăйĕн чи пĕчĕк пайĕнче те питĕ тĕплĕ пулса пынăшăн, пулăмсене питĕ асăрхануллăн тĕпченĕшĕн, пĕтĕмлетясем тума васкаманшăн, искусство пекех нумай енлĕ, ытла анлă пĕлтерĕшлĕ пулманшăн шеллемелле-ши вара?

Çĕнĕлĕх - хавхалану çимĕçĕ. Анчах мĕнле çулсемпе çитет-ши вăл çын патне? Вăл унччен пĕлнĕ сăнарсенчен тата ăсчах тĕпчевĕнчен мĕнпе уйрăлса тăрать? Унăн халиччен пĕлменлĕхĕ ăçтан тупăнать?

Çĕнĕлĕх уçни - пĕлменлĕх ерипен пĕтсе пынине, япаласемпе пулăмсен çыханăвĕсем тупăннине, вĕсен çĕнĕ пĕлтерĕшĕсем палăрма тытăннине пĕлтерет. «Хĕвел çĕр йĕри-тавра çаврăнать», - çирĕплетнĕ хăй вăхăтĕнче Птоломей. «Çĕр хĕвел йĕри-тавра çаврăнать», - хирĕçленĕ ăна Коперник темиçе çĕр çултан. Сăмахĕсем, хăвăрах куратăр, çавсемех, анчах вăхăт иртнĕçемĕн вĕсен хушшинчи çыхану йăлтах улшаннă, çапла вара этемлĕх пачах урăхла ăнлану патне пырса тухнă, çапла вара настоятель хăрушă еретик пулса тăнă.

Уçнă çĕнĕлĕхĕн тепĕр енĕ - ăна ăнланасси. Наукăпа техника çитĕнĕвĕсем кирек хăçан та çынсем хушшинче çярекен пĕлтерĕшĕсемпе пĕр килмеççĕ. Хĕвел тухнине, тяпене хăпарнине, анса ларнине эпир хамăр куçпа хамăр куратпăр пулсан, Коперника тярех епле ĕненмелле?

Кашни çĕнĕрен уçнă япала, пулăм çине çĕнĕ, урăх куçпа пăхма, çынсен тавракурăмне улăштарма ыйтать. Ку вара тĕн фанатикĕсемшĕн кăна мар, çĕнĕлĕхсене хаклакансемшĕн те çăмăл мар. Тĕслĕхрен, тĕнчипе паллă Гёте пирвайхи тухма тытаннă хаçатсене чарса лартмалла тесе шутланă. Вĕсем, ун шучĕпе, сăмах хакне, литература шайне чакараççĕ имĕш. Чарли Чаплин вара, сасăллă кино тухсан, калама çук хытă тарăхнă. Унăн шучĕпе хусканусем, мимика çеç лайăх сăнар тума пулăшаççĕ, сасă хушăнсан вара актёрсен выляни пурнăçран нимĕнпе те уйрăлмасть, апла пулсан, ку - искусство мар.

Хальхи вахăтра та эпир литературăпа искусство ĕçченĕсем тепĕр чух пĕр-пĕринпе тавлашнине, хирĕçĕве кĕнине куратпăр: кашниех хăйне чи лайăх çыракансен ретне кĕртесшĕн, зав хушăрах «пĕр цехра» ĕçлекен юлташĕсен произведенийĕсене ниепле те пысăк хак парасшăн мар. Çакă вăл хайĕн меслетне, ăсталăхне, тавракурăмне ыттисенчен мала хунăран тухса пырать.

Художество тĕлĕшĕнчен мĕн чухлĕ паха произведение тĕрĕс, кирлĕ пек хак парса хăварман хăй вăхăтĕнче? Вĕсен авторĕсем нишлĕхре, выçăлла-тутăллă пурăнса, никам сисмесĕрех çĕре кĕнĕ. Гойа художниках илер. Халĕ унăн картинисене миллионшар доллар парса хаклаççĕ. Дон-Кихотран мĕн каласа кулман-ши тата? Тахçан Сервантес сăнарне пĕтсе пыракан рыцарьсенчен тăрăхлани çеç тесе шутланă пулсан, халĕ эпир ăна ыр кă мăллă çын асапланăвĕ выраннe хуратпăр. Мĕн чухлĕ чăваш ăсчахĕ, çыравçихăйсен ĕçне тĕрĕс хакланине кĕтсе илеймесĕр, нушаран тухмасăр пурнăçа ирттернĕ. Ашмарин та, ĕмĕрĕпе чăваш чĕлхи словарьне туптанă пулин те, чухăнра вилнĕ.

Хăй умне тĕллев лартнă çын чăннипех те телейлĕ - вăл умри çулсене суйлама, вĕсене ваклама-пайлама пултарать: кун пек чухне вăл пурнăçпа ăнсăртран пулакан пулăмсемпе япаласен тыткăнне кĕрсе якмест, йăлтах урăхла - вĕсене хăй йĕркелесе-майласа пырать, çавна пулах пурнăçра чылай çитĕнясем тума пултарать.

Кашни суйлав вара - çул уйăрни çеç мар. Ăна пăрахăçлани те. Ума пĕр тĕллев лартрăмăр пулсан, теприне айккинче хăварма лекет. Уçăлакан çула пăрахăçлама вара нумай вăй кирлĕ.

И.Ефремов пĕр кĕнекинче çапла çырнă: «Эпир сире кирлĕ-кирлĕ мар тĕллевсенчен савăнсах хăтăлма вĕрентрĕмĕр, тепĕр çынна ытларах пулăшма хăнăхтартăмăр, чăн-чăн ĕç тути-масине туйтартăмăр. Ниме тăман япаласенчен хăтăлса телейлĕ тĕллев патне çитме пулăшрăмăр - творчество патне».

Ыттисене пăхса вĕренни те çĕнĕлĕх тупсăмĕсене шырама пулăшать. Çак йĕрке çутçанталăкран килет. Пăхар-ха кайăк чĕпписем çине - вĕсем амăшне кура вĕçме вĕренеççĕ вĕт, тискер кайăксем ура çине тăна-тăман апат шырама ашшĕ-амĕшĕ хыççăн каяççĕ. Эпир те, çынсем, калаçма камран вĕренетпĕр? Паллах, аттепе аннерен, аслисенчен. Çитĕнсен те çакнашкал тĕслĕхсем яланах кирлĕ пире - эпир хамăра килĕшекен сăнара евĕрлеме тытăнатпăр, вăл мĕнлерех ĕçленине, утнине, шутланине, мĕне юратнине хамăр ăшра картса хуратпăр, ăна кура хамăра хамăр хаклама вĕренетпĕр. Хамăр юратнă сăнар выраннe

кама суйланинчен çын малашлăхĕ мĕнле пуласси питĕ нумай килет. Ахальтен мар вырăссем «тусу кам пулнине кала - вара эсĕ кам пулнине пĕлтерĕп», теççĕ.

Творчествăра ireклĕхсĕр те май çук. Паллах, тыткăч çукки, ниме пăхăнайманни, никама итлеменни пулмалла мар ку. Ху пĕлнине, ху шухăшна çине тăрса ăнлантарма пĕлни-пултарни, умри йыварлăхсемпе кĕрешме хал çитерни - акă мĕнле ирĕклĕх пирки пырать калаçу.

Пĕля патне яркенмесĕр туртăнни, ху калас-тăвас тенине пурнăçа кĕртме пултарни, çирĕп тĕллев пурри, ыттисен пуян опычĕпе кирлĕ пек усă курма пĕлни - çĕнĕлĕх ĕçченĕсен паха енĕсем. Калăплă сăнар, усăллă пĕлтерĕш, ĕçе çăмаллатакан техника тупсăмĕ патне çитме тата мĕн кирлĕ-ши?

К. С. Станиславский 1907 çулта лартнă ыйту çине çапла хуравланă:

— Актёра таврана тимлĕ сăнама пĕлни, çивĕч ăс, пурне те ăша хума пултарни, темперамент, фантази, шалти тата тулашри туйăм, урăх çын рольне хăварт кĕме пĕлни, ритм, темп, музыкăна ăнланни, туйăмсен, хусканусен, сăмахсен чăнлахĕ, хăйне хăй кирек мĕнле самантра та тĕрĕс тытма пĕлни, ниçта та çĕтсе кайманни, сцена çинче ирĕклĕ утма пĕлнн тата ытти те кирлĕ.

Пултарулăх таврана сăнама пĕлнинчен пуçланать. Пĕр шутласан, пит ансат ку: кашниех пирĕнтен курать, илтет, шăршă туять, тутă пĕлет, анчах пăхасси те курасси - тĕрлĕ япала. Ахальтен мар афгансен çакăн пек каларăш пур: «Аякран сана кураймастăп, çывăхран - ниепле те асархаймастăп». Курма пĕлни çĕнĕлĕх ĕçĕнче çеç мар, ахаль пурнăçра та кирлĕ.

Классиксем хушшинче Свифт халĕ те ача-пăча писателĕ шутланать, анчах хăйĕн произведенине кулма-ахăрма çырман писатель, вăл этемĕн кăлтăкĕсене çивĕч питленĕ, çав хушăрах халăхсен пуласлăхне çырса кăтартнă, çынсем пустуй сăлтавпах вăрçă пуçлама пултарнине палăртнă, - халĕ çавна хамăр çĕршыв чиккисенче куратпăр.

Çĕнĕлĕхсен пĕлтерĕшне, ан тив наукăра пултăр-и вăл е художествăлла произведенире, эпир тярех йышăнма пултарайманнин сăлтавĕ мĕнре-ши? Тен, ахаль çыннăн ăс-хакăлĕ часах йышăнаймасть ăна? Тен, ахаль куçпа тярех асăрхайманнине хăйĕнчен тĕртсе ярать вăл? Çакăнтан тĕлĕнмелли çук. Çĕнĕлĕх, ан анланччăр тенĕ пекех, хăйне хăй хирĕçленĕ пек кăтартать. Гейне каланă пек: «Генийллĕ идейăсем - этем пуçне таçтан кĕрекен урлă-пирлĕ шухăшсем!»

Наукăпа техникăна, литературăпа искусствăна çĕнĕлĕх, илемлĕх, пулăмсен çыхăнăвĕ пĕрлештерет терĕмĕр. Çав хушăрах вĕсен ĕçченĕсене пĕрлештерекен хăйне евĕр уйрăмлăхсем те палăраççĕ. Кашни çын вĕсен ретне кĕрессе шанма çук. Пĕрремĕш уйрăмлăх вăл - чăнлăха парăнса тăни, ăна хăйĕн пурнăçĕнчен те хакла хуни. В. Полынин, Н. В. Кольцов генетик çинчен çырнă май, çакна палăртать:

- Хăйсен пурнăçне йăлтах тĕрĕслĕхпе усăллăха парăнакан, яланах пур çĕрте те тĕрĕслĕх шыракан çынсем пурах. Вĕсем - тĕпчевçĕсем. Чăн-чăн тĕпчевçĕ яланах тĕрĕслĕх патне утать, чăнлах уншăн - чи хакли, кăл-кал пурнăçран та, тутлă апатран та, пуянлăхран та хаклăраххи.

Ăçтан тупаççĕ-ха вĕсем çакна валли вăй? Хурав пĕрре çеç - пĕр хăйсенче, хăйсен шалти туйăм хăватĕнче, «турă панине» туйнинче.

Çĕнĕлĕх ĕçченĕсем хăйсен профессине пĕртен-пĕрре тесе шутлаççĕ, вĕсене чунпа ăс-хакăл лăпланма пĕлменни ĕçлеме хистет.

Çĕнĕлĕх шырас ăнтăлу пĕля те ыйтать, ку çынна этемлĕхĕн ĕлĕкхи тупсăмĕсемпе паллашма пулăшать. «Улăпсем çинче тăнăран эпĕ хам та пысăк», - тенĕ Ньютон. Нумай пĕлни умри тавракурăма анлăрах сарать, тавралăхри тĕлĕнтермĕшсене курма пулăшать.

Çĕнĕлĕх ĕçченĕн тепĕр уйрăмлăхĕ - хăйĕн шухăш-туйăмне çутта кăларма пикенни. Çын хăй пĕлнине ыттисем патне çитерме тăрăшать пулсан, ăна диплом илнĕ специалист çеç мар, чăн-чăн интеллигент теме пулать. Çакнашкал шалти туйăм ăна хăйне те пурнăçра ярĕкрех пулма хистет, унашкал çын панă пурнăçпа перекетлĕ усă курать, урăх çынсен нушине лайăхрах ăнланать.

Сăмахран, çын якерчĕк пăхса тăрать тейĕпĕр. Анчах пĕтĕмĕшле курма пултарать-ши вăл ăна? Çукпа пĕрех. Мĕншĕн тесен аякран пăхсан укерчĕк калăпашне çеç курать, ытлашши çывхарсан, унăн пĕр пайне çеç тинкĕрет. Çавăнпа та пăхаканăн, мĕн те пулин курас тесен, сăнамалли вырăн тупма пĕлмелле. Çакă та - çĕнĕлĕх ĕçĕнчи пултарусенчен пĕри.

Çĕнĕлĕх ĕçĕн тепĕр кирлĕ енĕ - шухăшлама пултарни. Вăл курнине-илтнине витĕмлĕ сăнар çине куçарма пулăшать, çĕнĕ пĕлтерĕш патне илсе тухать. «Шухашлатăп пулсан - пурăнатăп», - çапла каланă Декарт. «Шухăшлани - çĕнĕ пĕтĕмлетясем патне утăм туни», - тенĕ С. Рубинштейн психологсен пĕрремĕш пуçтарăвĕнче. Çак утăм тĕпчекен япалара халиччен пĕлнипе пĕлменнине уйăрнинчен, малалла шухăшлаттаракан ыйту лартнăран пуçланать.

Тĕрĕслĕх патне ăнтăлнă чух иккĕленя пур пулсан вара, тĕпчевçĕ эксперимент çине куçать, ăна ирттернĕ чух çĕр çинче çук условисем те хатĕрлеме пултарать. Экспериментпа пирĕнтен, шкулта вĕреннĕ пулсан, кашниех тĕл пулнă. Физика, хими урокĕнче ирттернĕ опытсем - пĕчĕк экспериментсем. Вĕсем çынсемшĕн сиенлĕ мар. Социаллă экпериментсем вара хăрушă: вĕсене çынсемпе ирттереççĕ, вĕсем хыççăн
мĕн пулнине каялла тавăрма, çавăрма çук. Калăпăр, çынна харпăрлăхĕнчен вăйпах уйăрсан, ăна тепĕр хут хуçа туйăмĕ кĕрĕ-ши?

Эксперимент та, логика та, ăнлантару та ыйту çине хурав памасан, мĕн тумалла-ши тата? Кунта пире фантази çеç пулăшма пултарать.

Шăпах фантази ĕнтĕ - çĕнĕлĕх ĕçĕнчи куçа курăнман хăйне евĕр пултару. Мĕнле майпа килсе кĕрет вăл пуçа? Çакăн çинчен никам та ним те калама пултарайманран талантлă çынсем çинчен: «Вăл турă панăран сăвăç ( е янерçĕ, е тĕпчевçĕ)». - теççĕ. Фантазие пулах пĕлменинче пĕлни, киввинче çĕнни тупăнать, пулманинчен пулни тухса тăрать.

Анчах та, çав териех йывăр-ши ăнлантарма çак пултарăва? Фантази çинчен пĕлме пире... фантази пулăшĕ, хайĕн варттăнлăхĕсене, меслечĕсене вăлах уçса парĕ.

Фантази халăх юмахĕн сăпкинче çуралать, калаçма утма пĕлмен ача чухне амăшĕн сăмахĕсемпе, юррисемпе кĕрет. Калаçакан чĕрчун, вĕçекен кавир, макăракан йывăç, кĕлеткине пĕрмай улăштаракан юмăç - пур-и вĕсем çĕр çинче, курнă-и вĕсене кам та пулин? Анчах та çак сăнарсем пирĕн умра чĕп-чĕррĕн тăраççĕ, йыварлăхсене чăтса иртерме вăй параççĕ.

Мĕнле калăпланаççĕ-ха вĕсем? Меслечĕ кăткăс та мар. Çын сăмахне чĕрчуна панăран, кавира кайăк çуначĕ хушнăран, çын хуйхине йывăçа парса чуна çăмăллатнăран... Пĕтĕмĕшле илсен, пĕр япалан, пулăмăн уйрăмлăхне теприпе çыхăнтарнăран.

Çак меслетпе юмахсем çеç мар, пурнăçра кирлĕ усăллăхсем те пулса тухаççĕ. Çапла вара çĕнĕ ăславсем вăй илеççĕ. Пĕри - бионика ятлăскер - çутçанталăкри пулăмсен уйрăмлахĕсене машинăсене хушса панипе аталаннă. Унăн сăнавĕсене шута илсе, торпедăсен формине дельфинсемпе китсен кĕлетки евĕр тунă. Çĕр чăмăрĕн ис-кусствăлла спутникĕсене сăнакан приборсем шапа куçĕ евĕр ĕçлеççĕ. Радио-локаторсен ĕç принципне çара çерçисем çĕрле куçпа усă курмасăр вĕçнине пăхса-сăнаса хатĕрленĕ.

Фантазин тепĕр меслечĕ - япаласене е вĕсен уйрăмлахĕсене пысăклатни-пĕчĕк-летни. Ăна пула литературăра гиперболăпа усă кураççĕ, техникăра микроскоп вырăн тупнă.

Хавхалану патне çитерекен çул кăткăс та йывăр. Çынран вăл пултару, ăс, ĕçченлĕх, çирĕп кăмăл, пĕля, ирĕклĕх, тĕллев патне туртăннине ыйтать, çĕнĕ сăнарсем, тупсăмсем, пĕлтермĕшсем шыранă чух тĕрлĕ меслетсемпе ăста усă курма хушать. Асăннинчен мĕн те пулин çитмест пулсассăн, татăлать хавхалану çулĕ. Ăсталăх пултарусăр, ĕçченлĕх ирĕклĕхсĕр, çирĕп кăмăл пĕлясĕр - ниме те тăмаççĕ, çынна пушшех тискерлетеççĕ. Ун чух вара çĕнĕлĕх çураласса, илемлĕх пуласса пĕртте шанма çук. Çавна пулах талантсем сахал пирĕн хушăра, çавна пулах пирĕн «турă палăртнă» кашни çынна упрамалла, пулăшмалла.